*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

94 (2506) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи апрелĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН

2014,
декабрь/раштав, 5

## КĔСКЕН

**Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Раççей Президенчĕ Владимир Путин Федераци Пухăвне çулсерен яракан Çырăвĕпе паллаштарнă çĕре хутшăннă.**

**Çав кунах республика ертўçи «Раççей транспорчĕ» ятлă Пĕтĕм тĕнчери VIII форумпа курава уçма тата Раççей транспорт министрĕпе Максим Соколовпа йĕркеленĕ ĕçлĕ апатланăва хутшăннă. Чăваш Ен транспорт министерстви курава хăйĕн экспозицине тăратнă.**

**Виçĕмкун Михаил Игнатьев Мускавра Раççей спорт министрĕпе Виталий Муткопа тĕл пулнă. Унта федерацин 2006-2015 çулсенче физкультурăпа спорта аталантарас тĕллевлĕ программăна пурнăçланине тишкернĕ. Чăваш Республикинче спорт объекчĕсем тăвассипе, çитес çул Шупашкарта çăмăл атлетсен командисен VI Европа чемпионатне (суперлига) ирттерессипе çыхăннă ыйтусене сўтсе явнă. Раççей спорт министерствипе Чăваш Республики физкультурăпа спорта аталантарас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе хутшăнса тата килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕва алă пусса çирĕплетнĕ.**

**РФ Конституци кунĕ, декабрĕн 12-мĕшĕ, çĕршывĕпех граждансене йышăнмалли кун пулать. 12 сехетрен пуçласа 20 сехетчен çынсем вăл е ку ыйтупа Раççей Президенчĕн регионти йышăну пўлĕмĕнче консультаци илме пултарĕç. Влаç органĕсен, республикăри ĕç тăвакан влаç тытăмĕсен тата вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен ертўçисемпе специалисчĕсем, юристсем килнĕ çынна ыйтăвĕсене хуравлĕç.**

**Сывлăх сыхлавĕн министерстви «Пĕлтерне тăрăх – «Земство тухтăрĕ» программа ĕçе кĕнĕренпе (2012 çултанпа) ялсенчи сиплев учрежденийĕсене 239 врач килнĕ. Ытларахăшĕ Канаш, Патăрьел, Шупашкар, Муркаш районĕсенчи больницăсене. Кăçал тĕллевлĕн вĕрентмешкĕн 9 çамрăк специалистпа килĕшў тунă, вĕсем интернатура хыççăн ялсенчи медучрежденисене кайĕç.**

## ПУРНĂÇ ТАППИ

### Ял хуçалăхне пулăшасси ўсмелле

ЧР Министрсен Кабинечĕн черетсĕр ларăвĕнче республикăн 2014 çулхи, планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи бюджетне улшăнусем кĕртессине тишкерсе ырланă.

Тĕнче политикипе çыхăннă кăткăслăх Раççейри финанспа экономика лару-тăрăвне витĕм кўрет, çакă республика бюджетне пурнăçлассинче те палăрать. Тĕслĕхрен, налуксен калăпăшĕ малтан палăртнинчен пĕчĕкрех пулса тухнă.

Ытти шайри бюджетсенчен каялла таварса памалла мар килекен укçа калăпăшĕ 1 млрд тенкĕ ытларах хушăнать. Пĕтĕмĕшле илсен ку виçе çулталăк пуçламăшĕнче палăртнинчен 4,8 млрд тенкĕ ўссе 16,1 млрд тенкĕпе танлашать. Пĕлтĕрхинчен 5,5 процент пысăкрах. Михаил Игнатьев çак ырă пулăм Мускавпа лайăх çыхăну тытса ĕçленипе пулнине палăртать.

Ял хуçалăхне пулăшасси ўсмелле. Ялсен территорийĕсене аталантарассипе пĕрле шутласан бюджетра ял хуçалăхĕ валли тата 299 млн тенке яхăн уйăрма палăртнă. Ял хуçалăх отраслне пĕтĕмпе 2,4 млрд тенкĕ хывĕç. Пĕлтĕрхи шайран кая мар ку. Сывлăх сыхлавĕн, вĕрентў, спорт объекчĕсене тĕпрен юсама 42,5 млн тенкĕ хушăнĕ.

Финанс министрĕ Светлана Енилина сăмахĕсем тăрăх – саккун проекчĕпе килĕшўллĕн республикăн кăçалхи бюджечĕн тупăш пайĕ 486 млн тенке яхăн ўсет. Çав вăхăтрах бюджетăн хамăр тупăшсенчен пухăнакан пайĕ 523 млн тенкĕ пĕчĕкленет. Тăкак пайĕ 403,2 млн тенкĕ пысăкланать.

Саккун проектне тишкерме Патшалăх Канашне тăратнă.

**ПАЯН** кун тăршшĕ 7 сехет те 14 минут. Уйăх тулса пырать.

**Филимон, Прокоп кунĕ. Хĕл каçакан кайăксен йăвинче мамăк, типĕ курăкпа улăм нумай-тăк – хĕл сивĕ пулĕ. Хуран тĕпĕнчи хăрăм çунма пуçласан – çанталăк улшăнать: юр çăвать.**

**ЫРАН – Митрахван кунĕ. Çак куна пăхса çулла мĕнле çанталăк пуласса чухланă. Юр çунипе пĕрлех çил çурçĕр енчен вĕрни – июнĕн 6-мĕшĕнче сивĕ çумăр çăвасса. Çуна çулĕ йĕркеленнине паллă тунă. Хăна-вĕрле пухнă.**

**ВИÇМИНЕ – çунашкапа ярăнтаракан Кĕтерне кунĕ. Пурте çуна сĕтĕрсе урама тухнă. Çак кун уяр пулни – сивĕ хĕле. Ĕне кайри урине силлени – сивĕ çанталăка. Уйăх тавра ункăсем пулни – сивĕтессе.**

## «Хыпар» хаçат – хăрушлăхра

1990 çулсен пуçламăшĕ. Мускав. Сокольники. Библиотека. Чăваш поэзийĕн каçĕ. Мускавра пурăнакан йăхташăмăрсем, Тăван Чĕлхемĕршĕн ялан тунсăхлаканскерсем, хăйсен уявне Шупашкартан ятарласа Светлана Асамата тата çак йĕркесен авторне чĕнсе илнĕ.

Чи малтан, аслă Çеçпĕлĕмĕрĕн "Чăваш ачине" сăввинчи вилĕмсĕр йĕркесене /"Килсем, килсем, эс пур, çук мар!.."/ хавхаланса каланă хыççăн, Виссарион Пряников ăсчах мана сăмах пачĕ. Эп халăх умне тухрăм /залра кам кăна çук! – генералĕ те, полковникĕ те, профессорĕ те, аспиранчĕ те!../, пĕр хушă чĕнмерĕм... унтан татăклăн "Эпир пулнă, пур, пулатпăр!" терĕм.

2-мĕш стр. ➔

| ÇАНТАЛĂК | Шупашкарта | Вăхăт | 5.12 | 6.12 | 7.12 | 8.12 | 9.12 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Температура, $^0C$ | 2-4 сехетре | –14 | –14 | –8 | –9 | –8 |
| | | 14-16 сехетре | –2 | –6 | –5 | –7 | –5 |
| | Юр çăвать | | ⁂ | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | | 755 | 765 | 758 | 759 | 758 |

ЯЛ-ЙЫШ — КИЛ — ХЎТЛĔХ — СЫВЛĂХ — ТĔПЕЛ

## УСĂ КУРМА

### Шăширен – пăхăр купоросĕ

Сад пахчи хĕллехи ыйхa путсан юр айĕнчи шăшисем хăйсен хура ĕçне тытăнаççĕ. Вăрман çывăхĕнче пурăнакансем патне вара куянсем те пырса тухаççĕ. Сиенленнĕ йывăçа çăлса хăварма йывăр. Чылай чухне вĕсем пуçĕпех пĕтеççĕ.

Шар курасран сыхлансах йывăççен вуллисене хырчăрăш лăссипе, кивĕ колготкипе çыхатпăр, юрпа таптаса хытаратпăр. Питĕ лайăх ку, çапах самай ансатрах меслет пур иккен. Ăна биологи наукисен кандидачĕ Алексей Борисович Горбунов сĕнет. Вăл çакна асăрханă: кĕркунне пăхăр купоросĕпе сирпĕтнĕ йывăççене кăшлакан чĕрчунсем тапăнмаççĕ. Пăхăр купоросĕ вăл – бордос шĕвекĕн пайĕ. Çĕр шăнма пуçласанах, ўсен-тăран ыйхa путма хатĕрленсен, мĕнпур йывăç-тĕме 1 процентлă бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Çапла тусан йывăççен çывăхне кăшлакан чĕрчунсем пымĕç. Çак препарат ўсен-тăрана чирчĕрпе сиенлĕ хурт-кăпшанкăран та упрать. Хĕл каçакан хурт-кăпшанкă çăмартисем те, кăмпа тата кукша чирне пуçаракан микробсем те пĕтеççĕ. Кăçал ку меслетпе усă курма кая юлтăмăр ĕнтĕ, çитес çул вара хура кĕркунне унпа усă курмаллах.

## СĔНЎ-КАНАШ

### Лайăх упранччăр

Нўхрепри пахча çимĕç тарласа кăвакарма пуçлани унти сывлăш питĕ нўрĕ пулнине пĕлтерет. Апла унта ешчĕкпе сўнтермен извеç лартма юрать. Вăл сывлăшри нўрĕке туртса илĕ. Нўр шайĕ чакнăçемĕн, извеçĕ йĕпенĕ. Çавăнпа вăхăт-вăхăтăн ешчĕкри извеçе улăштарса тăмалла.

Пахча çимĕç шанма пуçлани вара сывлăш питĕ типĕ пулнине пĕлтерет. Апла унта нўрлĕ пусма татки çакмалла е стенана шывпа пĕрĕхтермелле.

Катка-пичкепе тăварланă купăстапа хăяра тĕрĕслеме те манмалла мар. Кăвакăш паллисене асăрхасан вĕсене илмелле, пусарса тăракан йывăр япалана таса шывпа çумалла.

### ШЎТЛЕР-И?

Арăмĕ упăшки валли çырса хăварнинчен: «Чунăм, тархасшăн картинăна стена çине çакса хур! Вăл кĕтесре. Мăлатукпа пăта – шкапра сулахай енчи туртмара. Лейкопластырь, йод тата бинт – комодăн аялти ешчĕкĕнче.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Тĕк тĕсĕпе çыхăнман

**? Килти чăх çăмартин сарри – сап-сарă, лавккара туяннин – шуранка. Мĕншĕн? Хăмăр хупăллă çăмарта тутлăрах тени тĕрĕс-и?**

**Семен ЖУРАВЛЕВ. Канаш районĕ.**

Çăмарта саррин тĕсĕ унта каротиноидсем пуррипе, чăх-чĕпе мĕнле апат çитернинчен килет. Çăмарта тăвакан чăх рационĕнче ўсен-тăран çимĕçĕ пулсан, вĕсем ирĕккĕнех усăлса çўреме, çĕрте чаклама пултарсан сарри те сарă пулĕ. Сывă та лайăх çиекен чăх кăна çăмарта саррине каротиноид сахасĕ пухать текен шухăш пур.

Çăмарта хуппи шурă е хăмăр тĕслĕ пулни тĕк тĕсĕпе пачах çыхăнман. Çакă тўрремĕнех чăх ăрачĕпе тата генетикăпа çыхăннă. Паллах, хăшĕ тутлăраххине кашни хăй татса парать. Пĕр пек условисенче тытакан тĕрлĕ ăратри чăх çăмартинче витаминсемпе минералсем пĕрешкелех пулни паллă. Çăмарта пахалăхĕпе тути вара чăха мĕнле условире тытнинчен, апат пахалăхĕнчен тата чăх сывлăхĕнчен килет.

## ДЕКАБРĔН 5–15-МĔШĔСЕНЧЕ – ÇЫРĂНТАРУ ВУНĂКУНЛĂХĔ

### Йўнĕпе çырăнма васкăр!

Раççейре декабрĕн 5-15-мĕшĕсенче çырăнтару вунăкунлăхĕ иртет. Çак тапхăрта «Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те 2015 çулăн пĕрремĕш çурри валли йўнĕрех хакпа çырăнтараççĕ.

| Кăларăмсем | Индекс | 2015 çулăн пĕрремĕш çурринче илсе тăма çырăнтаракан хаçат-журнал хакĕсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче. Раштавăн 5-15-мĕшĕсенче | Почта уйрăмĕсенче. Декада хыççăн | Почта уйрăмĕсенче. Декада вăхăтĕнчи перекет | «Чăваш пичечĕ» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | ВД800 | 645 | 732,66 | -87,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | В8353 | 264,66 | 304,08 | -39,42 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 307,86 | 358,08 | -50,22 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 278,46 | 325,08 | -46,62 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 176,46 | 205,02 | -28,56 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 176,46 | 184,04 | -7,58 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 327,54 | 376,62 | -49,08 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | В3887 | 176,46 | 184,08 | -7,62 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 267,36 | 319,08 | -51,72 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 155,7 | 185,04 | -29,34 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | В3429 | 116,32 | 140,36 | -24,04 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 253,86 | 298,08 | -44,22 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 612,24 | 743,58 | -131,34 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 237,66 | 274,08 | -36,42 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 150,9 | 181,02 | -30,12 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 120,18 | 143,52 | -23,34 | 114 | 111 | 90 |

# «Хыпар» хаçат – хăрушлăхра

1-мĕш стр.

Пурте, "паллах! паллах, урăхла пулма та пултараймасть!" тенĕн хĕрӳллĕн алă çупрĕç, йăл-йăл кулчĕç. Анчах та эп темиçе самантран малтанхи пекех татăклăн "Пулмасан та пултаратпăр!" терĕм.

Алă çупакан пулмарĕ. Пурин те куçĕсенче – пĕр ыйту, пĕр туйăм, "Мĕскер? Мĕскер?.. Мĕнле апла – эпир пулмасан та пултаратпăр-и?! Çук, çук, мĕскер Эсир, çамрăк çын, кун пекки пулма пултараймасть!!!"

"Пулма пултарать! – терĕм эпĕ малтанхи пекех татăклăн. – Енчен те эпир хамăра хамăр хисеплемесен, енчен те эпир хамăрăн пуласлăхăмăршăн тăрăшмасан, ачамăрсене чăвашла вĕрентмесен, тăван литературăпа культурăна çине тăрса аталантармасан!.."

...Ахальтен аса илмерĕм эп паян тахçан, иртнĕ ĕмĕрĕн шавлă та пăлханullă 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Мускавра пулса иртнине. Мана паян та çав ыйтусемех пăшăрхантараççĕ, пулатпăр-и эпир? Еплерех пулĕç тепĕр 40-50 çултан чăваш чĕлхипе чăваш сăмахлăхĕ, чăваш литературипе культури?.. Çакăнпа пĕрле мана, паллах, "Хыпар" хаçат пуласлăхĕ пăшăрхантарать.

Тăванăмсем!

"Хыпар" хаçата – "чăваш халăхĕн хаçатне" – юлашки çулсенче **2000 çын** çырăнса тăнă. **2000 çын çеç!** Чăваш Ен тулашĕнче – **28 çын! 28 çын çеç!..**

Хăрушă-и? Хăрушă!..

Пĕрисем калама пултараççĕ, тăхтăр-ха, эсир хăвăрăн хаçатăрта "Хыпар" кунсерен 7384 экземпляр пичетленет тесе çирĕплететĕр-иç! Çапла, ку тĕрĕс. "Хыпар" паянхи кун чăнах та 7384 экземпляр пичетленет. Анчах та ку шутран 2000 экземплярне çеç пирĕн вулаканăмăрсем **çырăнса** илеççĕ...

...Лару-тăру çав тери çивĕч, çав тери кăткăс (кун пирки тӳррĕн те уçăмлăн каламасан, вăл пушшех çивĕчленĕ, пушшех кăткăсланĕ).

Кам айăплă?

Тираж ыйтăвĕ çакăн пекех çивĕчленсе çитнĕшĕн, халăхăмăр хăйĕн "тĕп хаçатĕнчен" писнĕшĕн пуринчен те ытларах айăпли, паллах, "Хыпар" хаçат хăй. Çакăн сăлтавĕсем пĕрре çеç мар, иккĕ çеç те мар. Эпир вĕсене пĕлетпĕр.

Кирек хăш хаçатăн, журналăн, кĕнекен, спектаклĕн, кинофильмăн шăпипе пуласлăхне пĕр япала, пĕр пулăм татса парать, кăсăклă-и çак хаçат, журнал т.ыт.те, е кăсăклă мар-и? Мĕн те пулин парать-и вăл вулаканпа куракана, е памасть-и?..

Шел, шăпах çак тĕлĕшпе хăйĕн вулаканĕшĕн пыракан çивĕч кĕрешӳре "Хыпар" хаçат выляса ячĕ, пысăк çухату тӳсрĕ.

Нумаях пулмасть, паллă ĕнтĕ, эпир, Раççей Президенчĕн В.В.Путинăн шаннă çыннисем тата Халăх фрончĕн хастарĕсем, Мускавра пуçтарăнтăмăр, тĕрлĕ çивĕч ыйтусене сӳтсе яврăмăр, хамăрăн Ертӳçĕмĕрпе тĕл пултăмăр. В.В.Путинăн шаннă çыннисен йышĕнче (вĕсем – пĕринчен тепри сумлăрах та хисеплĕрех) Кабарда-Балкар Республикинчи Тырнауз (чăвашла – "тăрна çăварĕ") хулинчи 3-мĕш вăтам шкул директорĕ Любовь Хутуева та пур. Пĕррехинче эп çак питĕ ăслă та пултарullă хĕрарăмран балкарсен тĕп "Заман" (Самана) ятлă хаçачĕ пирки ыйтса пĕлме шутларăм.

"Пирĕн халăх питĕ юратать "Заман" хаçата, – терĕ Любовь Шарафиевна, – вăл пĕтĕм халăха хумхантаракан çивĕч те кăткăс ыйтусене хускатать, тĕрлĕ шухăш-туйăмлă çынсене сăмах парать. "Заман" хаçат пире, балкар халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене, пĕр пысăк та вăйлă йыша пĕрлештерет, пирĕн халăха Халăх пулма пулăшать".

Паянхи "Хыпар" пирки эпир, чăваш-тăванăмсем, çакăн пек калаятпăр-и? Ман шутпа, хальлĕхе – çук. Шел пулин те, çук.

Тахçан вара шăпах "Хыпар", Н.В.Никольский никĕсленĕскер, Иван Яковлевич Яковлевăн Халалне асра тытса, Вĕрентекенĕмĕрĕн ĕçне малалла тăсса, чăваш халăхĕшĕн, Чăваш Тĕнчишĕн калама çук пысăк ĕç тунă. Вăл çĕршывăмăрăн чи йывăр, чи кăткăс тапхăрĕсенче те чăваш ывăлĕсемпе хĕрĕсене пĕр пысăк та хăватлă йыша пĕрлештернĕ, чăваш халăхне Халăх пулма пулăшнă, чăваш халăхне малалла ăнтăлма йыхăракан Ялав пулнă.

...Ялав тенĕрен. Пĕлекенсем пĕлеççĕ, пур çар чаçĕн те **хăйĕн ялавĕ** пур. Ялавсăр çар чаçĕ çар чаçĕ мар. Ялавне çухатнă чаçе ан тив, темле тискер те хаяр çапăçура пулса иртнĕ пултăр çакă, – салатса яраççĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăйĕн тĕп пуянлăхне – ЯЛАВНЕ – çухатнă.

Паянхи чăваш халăхне питĕ пысăк чаçпе танлаштарсан (мĕншĕн танлаштарас мар? Пурнăç, мĕн кĕрешӳ мар-им, вăрçă мар-им?), унăн хăйĕн Ялавĕ пур. Çав Ялав вăл – "Хыпар" хаçат. "Хыпар" хаçата çухатсан, эпир пĕтĕмпех çухататпăр. Чысăмăра та, мăнаçлăхăмăра та, пĕрлĕхĕмĕре те, пуласлăхăмăра та.

"Хыпар" хаçат – хăрушлăхра, Вулаканăмăр!

"Хыпар" хаçат санран пулăшу кĕтет.

Çырăнмаллах "Хыпара", çырăнмаллах!

**Валери ТУРКАЙ.**

## Амăшĕсене – укçапа çăмăллăх

Ача амăшне тата ачасене патшалăх пулăшăвĕ кӳресси çулран çул аталанса пырать. Çĕнĕ пенси саккунĕпе килĕшӳллĕн ачапа çулталăк çурă çитиччен ларнă вăхăт страхлав стажне кĕрет, пенси шутласа панă чух пĕтĕмпе 4,5 çул таран (виçĕ ачашăн ку илеççĕ, 2015 çултан вара – 6 çул таран. Ку çеç те мар, çав тапхăрта уйрăм пенси коэффициенчĕсем шутласа параççĕ. Вĕсен виçи кашни ачашăн ӳссе пырать: иккĕмĕш ачашăн 2 хут, виççĕмĕшĕпе тăваттăмĕшĕн – 3 хут. Тăватă ача çуратса вĕсемпе пĕтĕмпе 6 çул ларнă амăшĕн 24 коэффициент пухăнать, урăхла каласан ку – 28 пин тенкĕ шайĕнчи ĕç укçи.

Çавăн пекех нумай ачаллă амăшĕсемпе çурçĕр районĕсенче ĕçлесе пурăннисем 50 çултах пенсие тухма пултараççĕ. Чăваш Республикинче çул çитмесĕрех пенсие 17 пин ытла хĕрарăм тухнă. Вĕсем пурте пилĕк е ытларах ача çуратса вĕсене 8 çула çитиччен пăхса ӳстернĕскерсем. Инçет Çурçĕр районĕсенче тата унпа танлаштарнă вырăнсенче 17 календарь çулĕнчен кая мар ĕçленĕ, икĕ е ытларах ача çуратса ӳстернĕ 200 амăшĕ 50 çулта пенсие тухнă.

2013 çултан РФ Президенчĕн указĕпе инвалид ачана е ачаранпах I ушкăн инвалидне пăхса пурăнакан ĕçлемен амăшĕсене уйăхсерен тӳлекен укçана 1200 тенкĕ ӳстерсе 5500 тенке çитернĕ. Чăваш Енре 2,9 пин ашшĕ-амăшĕпе опекуна компенсаци тӳлевĕ параççĕ.

2007 çултан пуçласа ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ паракан амăшĕн капиталĕн сертификатне республикăра 56 пин ытла çемье тивĕçнĕ. Вĕсенчен 32 пин ытларахăшĕ пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă та ĕнтĕ, пĕр пин ытла çемье вара амăшĕн капиталне аслă ачисем вузра вĕреннĕшĕн тата кĕçĕннисене садике çӳретнĕшĕн тӳленĕ çĕре янă.

Аса илтеретпĕр: 2016 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратса ĕлкĕрекенсем (усрава илекенсем) амăшĕн капиталĕн сертификатне тивĕçеççĕ. Вăл сертификатпа кирек хăш вăхăт таран та усă курма май пулĕ.

### ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

## Хура пăнчăсем выляççĕ

**?** **Икĕ куçăмра та темле хура пăнчăсем выляççĕ. Ку япала 5-мĕш класра вĕреннĕ чухнех пуçланнă. Тухтăрсем суккăр пулмăн тесе лăплантараççĕ-ха, анчах эпĕ шикленетĕп. Кăçал 66 çула кайрăм. Мĕн сăлтавпа куçăма çапла курăнать-ши? Унран мĕнле хăтăлмалла?**

**Анатолий ТИМОФЕЕВ. Красноармейски районĕ, Кӳлхĕрри.**

Хисеплĕ Анатолий Тимофеевич, куçра хура пăнчăсем ярăннине тухтăрсем тăтăшах ывăннипе, сывăрса тăранайманнипе, организмра витаминсем çитменнипе, юн пусăмĕ тăруках ӳснипе е чакнипе, пуçпа çапăннипе çыхăнтараççĕ. Çакă çамрăклах палăрни веществосен çаврăнăшĕ пăсăлнипе, сахăр диабечĕпе е юн тымарĕсен чирĕпе те сăлтавланма пултарнă. Чылай чухне куçа тем те пĕр курăннинчен нимĕнле операци те тумаççĕ, врач эмелсем кăна çырса парать.

Сире хальчченхи пекех вăхăт-вăхăтăн куç тухтăрĕ патне кайса тăма сĕнетпĕр. Сиенлĕ йăласем пулсан вĕсенчен хăтăлмалла. Апата уяса çимелле, вăхăтра канмалла, кирлĕ чухлĕ çывăрмалла, хирĕçӳ-тарăхуран пăрănмалла. Ытларах усă сывлăшра уçăлса çӳремелле. Пурнăçа тата хăвăра юратса пурăнмалла.

### КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?



**Ача шăлĕсемпе шатăртаттарсан.** Хура çăкăр касăкне ыхрапа сĕрсе сĕтпе сыпса ямалла. Çапла 3-4 хут çисе выртсан ача çывăрнă вăхăтра шăлĕсемпе шатăртаттарма пăрахĕ.

**Çăвартан лайăх мар шăршă кĕрсен.** Эрнере икĕ хут шăла порошок пек тунă активациленĕ кăмрăкпа (активированный уголь) тасатмалла, унтан шывпа чӳхемелле. Шăл шуралнипе пĕрлех лайăх мар шăршă та çухалĕ.

**Климакс пуçлансан.** Хĕрлĕ кăшман сĕткенне кăлармалла, 4 сехет тăрăлтарса лартмалла, унтан пылпа хутăштармалла (1:1). Кунне 3 хут 60-шар мл ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ 10 кун, кайран çавăн чухлех канмалла та каллех сипленмелле. Вĕрилентерме пăрахĕ, юн пусăмĕ те ӳссе каймĕ.

### ШУТА ИЛМЕ

## Усăллă бактерисен пурнăçĕ

Кирек епле çын организмĕнче те темиçе килограмм чухлĕ бактери пурăнать. Пыршăлăха пурăнакансем апат-çимĕçе ирĕлтерме пулăшнисĕр пуçне пирĕн ӳтпӳри биохими ĕçĕсене те йĕркелеме пулăшаççĕ. Унсăр пуçне вĕсем хăйсем те витаминсем кăлараççĕ. Тĕслĕхрен, бифидобактерисем В ушкăнри витаминсене, çавăн пекех вĕсене организма сăрхăнма пулăшакан аминокислотсемпе белока çыхăнтараççĕ. Пыршăлăх палочки иммунитетсен молекулине çыхăнтарнă май тĕрлĕ инфекци аталанас хăрушлăх чакать. Лактобактерисем вара пыршăлăха йӳçек кăларса Д витамина, тимĕрпе кальцие сăрхăнма пулăшаççĕ.

Микроорганизмсен пур 500 тĕсĕ пулни те сывлăхшăн пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем сахаллансан пыршăлăх дисбактериозĕ пуçланать. Усăллă бактерисем вырăнне чир пуçараканнисем йышăнса хăйсен хура ĕçне пуçăнаççĕ. Пыршăлăх дисбактериозне пула ват хăмпипе ват кăларакан çулсен чирĕ, хулăн пыршăн лăймака сийĕн шыççи (колит), гастрит, аллерги, час-часах шăнса пăсăласси пуçланать.

Усăллă бактерисем хăйсене лайăх туйчăр, пирĕншĕн чăн-чăн тус пулччăр тесен мĕн тумалла-ха?

Чи малтанах хамăр мĕн çисе пурăннине пăхса тухмалла, унтан майĕпен рациона пыршăлăх бактерийĕсене йĕркеллĕ ĕçлеме пулăшакан çимĕçсене кĕртме пуçламалла. Ку вăл йӳçĕхнĕ сĕтпе турăх, улма-çырлапа пахча çимĕçĕ, рафинадламан (тасатман) тип çу, авăртман тырăран хатĕрленĕ çимĕçсем.

Шăнса пăсăлнинчен тата хырăмлăхпа пыршăлăх чирĕсене вăхăтра сиплеме тăрăшмалла. Тухтăр антибиотик çырса памасăр та унпа сипленме кирлĕ мар. Антибиотикпа сипленме тивсен пыршăлăх микрофлорине лайăхлатма усăллă бактерисене йышланма пулăшакан çимĕçсем çимелле. Уйрăмах ешĕл çимĕçпе техĕмлĕх кĕртекеннисене шута илмелле. Калăпăр, пыршăлăхра микрофлора ĕçĕ пăсăлсан вăй илекен кăмпа чирне петрушка, сельдерей, гвоздика, корица малалла аталанма чарать.

Вĕчĕрхенме, тарăхма кирлĕ мар, усăллă бактерисем кăшт стресс тӳснипех вилме пултараççĕ. Çавăнпа кăмăл-туйăма лайăхлатакан майсене шырама, тупма пĕлмелле.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*



## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТĂП ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, зерно,** к/корм, сахар, **муку.** Д-ка. Т. 89373916016.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором.Т.: 44-20-97, 89033582097.

## КĂМĂЛ-СИПЕТ



Игнатий (СУРАНОВ) иеромонах, Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ

# «Артист эпĕ. Ташлатăп...»

Ачасем тӳрĕ çултан пăрăннишĕн чи малтанах эпир, аслисем, айăпли çинчен пуçарнă сăмахăмах малалла тăсас килет. Пĕлместĕп, тин çеç паллă тунă Аннесен кунĕ хыççăн çакăн пирки калаçни, тен, вырăнлă та мар-и, анчах эпир, чиркӳ çыннисем, хамăра архиерей алă хурса священник тивлетне панă чухне халăха пур вăхăтра та вĕрентме тупа тунă. Çавăнпа халĕ те хамăн тивĕçе пурнăçласах килет. Йышăнатăр-и ăна, йышăнмастăр-и – халăх калашле, сирĕн мăнтăр кăмăлăр. Кӳренекен пулсан та нимĕн чухлĕ те пăшăрханмастăп, мĕншĕн тесен хама Турă Сăмахĕпе тӳрре кăларатăп. Унта ăс пур çынсем кăна хăйсене питлекене юратни çинчен каланă. Усал çынсене ӳпкелесен намăс курăн тенĕ (Ытар 9:7-9). Эсĕ вара, хаклă вулаканăм, ăслă пул. Ыттисем тăвакан йăнăша ан ту. Юрать-и?

... Çав кун каçхи кĕлле каяс умĕн пăртак канса илесшĕнччĕ. Пулмарĕ. «Эй, Турă, Турă Ывăлĕ Иисус Христос, çырлах мана, çылăхлăскере!» – шаккать алăкран пĕри. «Кĕме юрать-и?» – тесе ыйтни пулать ку мăнастирте. Çавăнпа «аминь» тетĕп юранине пĕлтерсе. Хамăр иеромонахсенчен пĕри канăç памасть иккен мана.

– Мĕн пулнă?

– Çын килнĕ, пирĕн пата пурăнма юласшăн.

– Мĕнле çын?

– Артист тет хăйне.

– Мĕн?! Мĕнле артист тата?

– Балет артисчĕ.

– Çав кăна çитмен пире, – ватă çынла мăкăртататăп çакна илтсен. Хам вара Авраам – ĕненекенсен ашшĕ – çулçӳрекенсем тесе Турă Ангелĕсене хăна туса янине аса илсе килнĕ çын патне тухатăп.

Алкумĕнче пĕр вăтăр çулсенчи арçын сулланса тăрать. Шăнса кӳтнĕ аллисемпе çĕлĕкне тăрмалать хăй. Ӳсĕр пулни тӳрех курăнчĕ-ха, анчах калаçма пуçласан çакăн пирки пĕр иккĕленӳ те юлмарĕ.

– Илĕр мана мăнастире. Пурнăçăм вĕçленичченех сирĕншĕн ĕçлесе тăрăп. Мĕн хушатăр, çавна тăвăп...

– Кам эсĕ? Ăçтан? – унăн сăмахне илтмен пек хамăн яланхи ыйтусенех паратăп ăна. Пирĕн патăмăрта пурăнас текен пĕрремĕш çын мар-çке вăл. Манăн, асли пулнă май, кашнийĕнпех паллашмалла, ыйтса пĕлмелле – пуçĕнче мĕн?

– Артист эпĕ. Ташлатăп, – хуравлать хайхи. Ахаль-махаль артист кăна мар, 9 çул çар часĕнче юрăпа ташă ансамблĕн солисчĕ пулнă. Çар билечĕ çине те çаплах çырса хунă.

– Шел, пире, манахсене, балет пăхма юрамасть çав... Çавăнпа йышăнаймастăп сана.

– Йышăнăр ĕнтĕ, тархасшăн. Манăн урăх ниçта каймалли те çук, – çине тăрсах йăлăнать вăл. Макăрса яманни кăна.

– Ăçтан килтĕн, çавăнта кай.

– Килтенех килтĕм-ха. Анчах анне мана унтан хăваласа ячĕ. Манахсем патне кайса пурăн терĕ.

– Апла пулсан та, тăванăм, килнех таврăн. Аннӳрен каçару ыйт.

– Каçармасть вăл мана.

– Манахсем каçарма хушрĕç, – тесех кала эсĕ. Тĕрĕс ăс-тăн парса ӳстерейменнулсан, çакăншăн сана мар, хăйне айăплатăр. Мĕнле пур – çапла йышăнтăр ывăлне. Санăн та хăвна алла илмелле. Пурнăçа ташласа кăна ирттерме юрамасть.

**PS.** *Вăл ун чухне килне çитнипе çитменнине тĕрĕс калаймăп сана, вулаканăм, анчах çул çине тесе панă укçа пирĕн ялти «кулинарккăрах» пĕтнине питĕ лайăх пĕлетĕп. Вăт çапла.*

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

# Купăс юсакана тупасчĕ

**? Хисеплĕ редакци. Йĕпреç районĕнчи Малиновка ялĕнче пурăнакансем чăрмантараççĕ сире. Концертсем лартма çӳретпĕр. Сцена çине хитре сасăллă купăспа тухас килет. Анчах пирĕн хушăра кивелнĕ тата юсамалли купăссем нумайланса кайрĕç. Купăс тавраш юсама пултаракансене тупасчĕ. Хамăн кĕсье телефонне те пĕлтеретĕп: 8937 373 68 35.**

**Анатолий ВАСИЛЬЕВ. Йĕпреç районĕ, Малиновка.**

Хисеплĕ Анатолий Никитович, республикăра музыка инструменчĕсене юсассипе ĕçлекен ятарлă мастерской çук. Уйрăм ăстасене вара тупма пулать. Эпир сире вĕсенчен пĕринпе паллаштарасшăн. Федор Васильевич Портнов Çĕнĕ Шупашкар хулинче пурăнать. Вăл хăй те купăспа лайăх калать. Кирек епле хут купăса, баяна, аккордеона юсама пултарать. Сăмах май, унăн сутлăх музыка хатĕр-хĕтĕрĕ те пур. Унпа çак телефонпа çыхăнмалла: 8 927 842 00 89.

# Шăнтни те усăллă

**? Хĕлле тепĕр чухне яшкана шăннă купăста ярса пĕçеретпĕр. Çакăн усси пур-и? Витаминсемпе микроэлементсем çухалмаççĕ-и?**

**Тимофей ГРИГОРЬЕВ. Тăвай районĕ, Ямбулат.**

Йӳçĕтнĕ купăста пахалăхне сивĕре те çухатмасть, анчах ăна ирĕлсе çитсен кăна çимелле. Пĕрре ирĕлтерсе тепре шăнтсан С витамин çухалать. Чĕрĕлле тураса морозильника хунă купăста та питĕ лайăх.

Çĕнĕ уйăхпа тăварланă купăста хытă та кăчăр-кăчăр пулать. Çемçереххине юратакансене вара уйăхăн юлашки чĕрĕкĕ чухне тăварлама сĕнеççĕ. Тăварланă купăстана 0 градуса яхăн температурăра упраççĕ. Тăвар шывĕ ăна хупласа тăмалла, унсăрăн С витамин арканать, çавăнпа та купăстана çиес умĕн çеç савăтран кăлармалла.

# Панулми ăшĕ хуралать

**? Упрама хунă панулми варри темшĕн хуралать? Сăлтавĕ мĕнреши? Малашне апла ан пултăр тесен мĕн тумалла?**

**Татьяна ИВАНОВА. Çĕрпӳ.**



Йывăç çинчен питĕ кая юлса татсан çапла пулакан. Кальци çитменнипе те сыхăнма пултарнă. Малашне панулми татиччен кăшт маларах йывăççене 0,3-0,7 процентлă хлорлă кальци шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Çимĕçе вăхăтра татмалла.

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР



### Ашпа тунă винегрет

250 г ĕне ашĕ, 4 çĕрулми, 2 кишĕр, 1 хĕрлĕ кăшман, тăварланă 2 хăяр, 150 г йӳçĕтнĕ купăста, 3-4 çăмарта, çур банка консерваланă симĕс пăрça, тăвар, петрушка, тип çу е майонез.

1. Ĕне ашне вĕрекен шыва ярса пĕçермелле, сивĕтмелле.

2. Çăмартана чăмăрла пĕçермелле. Пĕрне илемлетме хăвармалла.

3. Çĕрулми, кишĕр, хĕрлĕ кăшман пĕçермелле, сивĕтмелле. Тăваткаласа турамалла.

4. Симĕс пăрçана дуршлага ярса шывĕ сăрхăнса пĕтессе кĕтмелле.

5. Какая, çăмартана, тăварланă хăяра тăваткалласа турамалла.

6. Хатĕрленĕ çимĕçсене пурне те пĕрлештерсе пăтратмалла, тăвар калаттармалла.

7. Майонез е тип çу хушмалла. Çăмартаран, хĕрлĕ кăшманран, кишĕртен касса кăларнă «чечексемпе», укроп çулçипе илемлетмелле.

*Асăрхаттарни:* тип çу çине çуршар чей кашăкĕ лимон сĕткенĕпе горчица тата чĕптĕм аваăртнă хура пăрăç хушсан винегрет тути тата лайăхланĕ.

## КИЛ-ТĔРĔШРЕ

# Сухан хуппи

Хĕл каçипе сухан хуппине миххипех пухма пулать. Унпа туса лартнă шывра тем те пур: кальци, кали, марганец, магни, тимĕр, пăхăр, селен, хром, бор тата ытти те. Сухан хуппи тăпрари чир-чĕре пĕтернипе пĕрлех ӳсен-тăрана микроэлементсемпе апатлантарать. Сухан хуппи шывĕ ӳсен-тăрана ӳсме пулăшать, чир-чĕрпе сиенлĕ хурт-кăпшанкă ересрен хӳтĕлет.

Хăяршăн вăл çăлăнăç вырăннех. Хăяр çулçи кăшт сарăхма пуçланине асăрхасанах 10 литрлă савăта икĕ ывăç сухан хуппи хурса туличчен шыв ямалла, 5 минута яхăн вĕретмелле. Тăрăлантарнă хыççăн, сăрăхтармалла. Пĕр витре шыва ăна 2 л хушса лейкăпа хăяра шăвармалла. Çакна ирпе тумалла. Сăрăхтарнă хыççăн юлнă сухан хуппи мульча вырăнне те питĕ лайăх.

Хăяра сăвăс ерсен ӳсен-тăрана сирпĕтме сухан хуппипе усă курмалла: 10 л шыва 200 г сухан хуппи ярса 4-5 кун лартмалла, сăрăхтармалла. Вицĕ хутран кая мар сирпĕтмелле, кашни 5 кун урлă.

Пахча çимĕçе тапăнакан пыйтăпа кĕрешме çакнашкал меслет пулăшĕ: витрене çурри таран сухан хуппипе тултармалла, туличчен вĕри шыв ямалла, пĕр талăк тăрăлантарса лартсан сăрăхтармалла, икĕ хут ытларах илнĕ шывпа хутăштармалла. Баклажанпа çĕрулмине тапăнакан колорадо нăрринчен те аван ку.

Улмуççине панулми хуртĕнчен хӳтĕлесе çӳлерех асăннă шĕвексенчен кирек хăшне хатĕрлесе сапма юрать. Чечеке ларса сӳннĕ хыççăн пирвайхи ăшă каçах хĕвел ансан сапмалла. 7 кун иртсен – тепĕр хут.

Панулмине, грушăна полиэтилен хутаçа хурса вĕтетнĕ сухан хуппипе сапмалла.

Упрама хунă тымар çимĕçе вĕтетнĕ çăмарта хуппипе сапсан вĕсене кăмпа чирĕ ермĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, декабрĕн 8-мĕшĕ**

6.30-7.00 Вăрман кĕвви. (12+) 7.10-8.00 Янра, юрă! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 15.30-16.00 Çĕрсум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Мăшăр çунат. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, декабрĕн 9-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕрсум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, декабрĕн 10-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22,30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Çĕрсум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Студгородок . (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 22.30-23.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, декабрĕн 11-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Вĕрентекен сăмахĕ. (12+) 18.10-19.00 Мăшăру эп сан, ай, пулам-и? (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Путь к здоровью. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, декабрĕн 12-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30 Республика сасси . (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 16.10-16.30,18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Путь к здоровью. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕрсум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Пурнăç çынни. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, декабрĕн 13-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Пурнăç çынни. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.10-16.00 Иксĕлми çăлкуçсем. (12+) 16.30-17.00 Республика сасси. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, декабрĕн 14-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Путь к здоровью. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăмпуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Вĕрентекен сăмахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Рабочая смена. (12+) 16.30-17.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.10-18.00 Мăшăру эп сан, ай, пулам-и? (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

